**Раиса САРПИ**

# Хаваслӑ-ҫке санпа пĕрле



**ПОЭТ ЮРАТĂВНЕ ТИВĔҪНИСЕМ**
Поэт юратăвне тивĕҫнисем –
Ĕмĕрлĕх-вилĕмсĕрлĕхе вĕҫнисем
Пулаҫҫĕ Вĕҫсĕрлĕх-пуласлăхра,
Мухтавлăхра, хăватлă Аслăхра.

**АН ТИВ...**
... Ан тив, тумхахлă манăн ҫул...
Кавар ҫине кавар...
Туртман, туртмастăп, туртас ҫук
Ҫын аллипе кăвар!..

Кавар туса, чуна ҫисе
Пурнаҫҫĕ "тусăмсем".
Йăл ҫиҫĕмле хĕрсе ҫиҫем –
Ҫуталчăр шуҫăмсем...

**СУЯ ҪУТИСЕМ...**
Ялтра ҫăлтăрсен суя ҫутисем
Каҫхи тӳпене ҫеҫ кӳреҫҫĕ илем...
Хĕвел ҫĕкленсен, ҫăлтăрсем пуҫ усаҫҫĕ...
Хĕвел ҫутинче ҫăлтăрсем шупкалаҫҫĕ...
Хĕвел хевтипе ҫăлтăрсем йăлкăшаҫҫĕ,
Анчах та ҫакна, – айвансем, – ăнланмаҫҫĕ...

**ТĂВАНЛĂХ**
Ҫил улать Шăхаль вăрманĕнче...
Хăтлă халь утарҫă ҫуртĕнче!..
Мĕлтлетсе ҫунать шăнҫу-ҫурта,
Ҫутатать вăл пĕчĕкҫĕ ҫурта.
Кĕтесре ларать симпыл пички,

Ун ҫинче выртать пуртти-пӑчки.
Тепӗр кӗтесре – вутти-шанки.
Йӑшӑлтаткалать хурт-кӑпшанки.
Шартлатса ҫунать хавас вучах,
Эп паян кунта пӗччен анчах.
Ӑшӑтать ман шӑннӑ шӑмшака
Пӗчӗкҫеҫҫӗ кирпӗч кӑмака.
Тинкерсе пӑхатӑп вут ҫине,
Ӑшӑтасшӑн шӑн ӗмӗтсене.
Шухӑшсем вӗҫеҫҫӗ аякка,
Ӗмӗте кӗрет мӑн мӑнакка...
Ак, умма шуса тухать анне,
Ҫӳҫӗме вӑл сӗртӗнет манне...
Ак, аттем те умӑмрах тӑрать,
Эпӗ шӑнасран чунтан хӑрать.
Асаттем те куҫӑм умӗнче.
Асаннем те – унӑн ҫумӗнче...
Алран ал тӑраҫҫӗ хуньӑмсем...
Умӑмра шӑваҫҫӗ кунӑмсем...
Асилӳ хапхийӗ уҫӑлать,
(Этеме тӑванлӑх ҫеҫ ҫӑлать!)
Тӑвансем тӑраҫҫӗ чӗрӗлсе –
Ак, умма килеҫҫӗ хӗрӗлсе:
Паганини купӑсне сӗрет,
Леонардо чертежсем чӗрет.
Ак, пӳрте сольфеджио кӗрет,
Юнашар пӗр пӗчӗк "пи" йӗрет...

***
"Ах!" та "ах"! тесе ҫеҫ ҫӳрес пур,
Пурӑнас та ҫук ҫут тӗнчере!
Курмаллах этемӗн хура-шур,
Унсӑрӑн аталанмасть чӗре.
Асапа ҫӗнсе, этем, йӑл кул!
Хуть хӑҫан та савӑнӑҫлӑ пул.
Шырасассӑн кукӑр, ҫӑмӑл ҫул,
Ырлӑх сӗнмӗ пурӑнӑҫ – кун-ҫул...

## МӐНКУНРИ ТӖЛӖК

Ирпе ытла та тӗлӗк тутлӑ,
Ӳт-пӳ хӗрхевлӗ ырлӑхра.
Чӗре суранӗ мӗншӗн вутлӑн
Юрлать ирхи шеп шӑплӑхра?

Шап-шурӑ ӳт ҫинчен юрлать вӑл.
Анчах та тӗксӗм ӳтлӗ эп.
Ҫут ҫӑлтӑр-куҫсене йӑрлать вӑл,
Эп ҫӑлтӑр куҫлӑ мар-и шеп?

Тавра чуптӑвусем шӑршиллӗ,
Пылак шур чечексен тӗтри.
Уҫ ҫил вылять садра ӑш-пиллӗн.
Пуҫра – ыр ӗмӗтсен тӗрри.

Мӑнкун ик ҫӑмарта пӗветӗп,
Пӗлсем, савни, савап сана.
Чупту та ытала, тивлетӗм,
Кӗтме пит йывӑр-ҫке мана.

## КӐНТӐРЛАХИ ТӖЛӖК

Ишет хулам шур пӗлӗтсемлӗн
Сенкер-кӑвак шӑплӑхалла.
Чунпа ҫӳле ҫӗкленнӗҫемӗн
Ҫуркуннене тытап алла.

Самантлӑха ҫеҫ алчӑратӑп...
Хӑр уйрӑлу алӑкӑмра:
Ак ӗнтӗ кулянса тӑратӑп,
Ҫил тунсӑхлӑн юрлать умра.

Ӑҫта эс вӗҫрӗн, манӑн кайкӑр?!
Ытла та тунсӑх-ҫке пӗччен.
Пӑчӑртанать хӑрхавлӑ кӑкӑр –
Лӑпланмӗ чун эс киличчен.

Ҫавран вӗҫеҫҫӗ кайӑк майлӑ
Ман сӑвӑлла ҫырӑвӑмсем.
Йӑр кайрӗ ҫӗр ман ура айлӗн...
Килеҫҫӗ ырӑ кунӑмсем...

## ПОЭТ ХӐЙ АЛ ПУСНИ

Туйнатчӗ, ӳсӗр тарӑхуллӑн,
"Кӑпӑкланатчӗ сӑра пек -

Чул хушăкне шыв тăрануллăн
Сиксе, çиçсе пăр çĕççипе"...

Чулсем çинче хĕрелнĕ вилĕм,
Кĕрешнĕ пурнăç вилĕмпе.
Чун-чĕреме халь сăвăç пилĕ –
Çиçет асамлă çут хĕмпе.

Чап çинчен мар шутланă гени!
Шăратнă аслă шухăшне.
Хĕвеллĕхе ун ăсĕ кĕнĕ!
Хĕм кĕртнĕ вăл этем ăшне...

Тен туйăнчĕ: яр куртăм – тупрăм
Эп Лермонтов ал пуснине...
Хӳреллĕ пăнчăсене хупрăм
Ахальтен мар вăл çырнине...

Ун евĕрех çырас килет,
Ун пиллĕхне чĕре илет...

**АТĂЛ ПИКИН ТĔЛĔКĔ**

Каллех юрлас килет-çке ман:
Çурт лартăп Атăл хĕрринче.
Тавра эп лартăп çич юман,
Кунта – ман пурнăç. Ман тĕнче!

Эп ватăлас çук ку çуртра!
Пурăннăçем яшланăп эп.
Эс те пурнас çук çич ютра,
Пĕрле юрлар-и юрă шеп?..

Хаваслă-çке санпа пĕрле
Пăхма Атăл хумĕсене,
Ирпе те, кăнтăрла, çĕрле
Пухма хисеп сумĕсене.

Куççуль ан юхтăр куçсенчен,
Чунра ешертĕр çуркунне,
Туссем те килччĕр çич енчен,
Хĕлле, çулла е кĕркунне.

**ТЫТРĂМ ТА ТАШЛАРĂМ**

Тытрăм та юрларăм юррăма...
*Василий Велвокай.*

Тытрăм та ташларăм ташшăма,
Хускатса хитре шăмшакăма.
Тата мĕскер пур-ши хаклăраххи
Ташлама пултарнинчен лайăхраххи?

Тытрăм та юрларăм юррăма,
Тытрăм та ташларăм ташшăма,
Юрлăр манпа пĕрле хавасланса,
Ташлăр манпа пĕрле хавхаланса.

**АТТЕНЕ**

*В.Е.Яковлев-Велвокая – аттеме*

Пĕчченех пурăнать халь аттем ялăмра...
Аллине вăл тытать те янравлă тăмра,
Чун-чĕри вучахне кĕвĕпе чăлт! хутать...
Аннене асăнса, кăмăлне йăл! çутать...
Çывăрать ĕмĕрхи ыйхăпа ман анне.
Кураяс çук текех ун хевтеллĕ сăнне...
Кăлармасть мăшăрне ман атте асĕнчен,
Шухăшлать яланах вăл аннемĕр çинчен.

Пĕчченех пурăнать халь аттем ялăмра...
Ир те каç вăл пĕрмай чунăмра, асăмра.
Йыхравлатăп ăна пурăнма хам пата...
Юратмасть хулана ман атте, тупата!
Вăл яла юратать, аннене юратать,
Асăнса, сăвăсем-юрăсем çуратать...
Сăввинче-юрринче юрату шăранать,
Юрату кĕввинче çĕнĕ кун вăранать.

Пĕчченех пурăнать халь аттем ялăмра...
Пӳрт умне анне лартнă хаваслă йăмра
Ман аттем юррине тараватлăн тимлет...
Юрăпа ман аттем ял-йыша та имлет!..
Тăмпăр-тăмпăр туса янрасассăн тăмра,
Çилсĕрех таш-ташлать хĕпĕртӳллĕн йăмра!
Йăмрара аннен чунĕ пурнать пулмалла...
Пурăнма хамăнах ман яла юлмалла...

## ЛАРУ-ТӐРУ

Ӑслă пулнă пулсан, хурланаттăм:
– Мĕн тери телейсĕр эпĕ...
Ухмах пулнăран, савăнатăп:
– Мĕн тери телейлĕ эпĕ!

***

Ҫемье тӳпинче аслати авăтнă чух,
Теприсем сана йышăнман чух,
Тусусем урнă чух кĕвĕҫсе,
Эс ман пата килетĕн вĕҫсе,
Эпĕ – заппасри аэродром-им?..

Эпĕ нимĕнле кукурузниксене те,
вертолетчиксене те,
Боингсене те йышăнмастăп.

Эп – аэродром мар!
Эп – космодром!

## ПАХЧАҪӐ

Ҫурхи кун тăрантарать ҫулталăк!
Ҫак ăнлав чунра тăрать яланлăх.
Юрласа тухатăп пахчана,
Ĕҫлеме чĕнетĕп ачана.

Ĕрчетер, туссем,
пахча-садсем –
Пурнăҫа илем кӳреҫ вĕсем.
Тăрăшса ĕҫлер яра куна,
Пĕр-пĕрне телей суна-суна.

Пахчара – садра – тем тĕрлĕ йывăҫ,
Ҫырлине тататăн ывăҫ-ывăҫ.
Ҫĕрулми, хăяр та памитур,
Талккишпех – пулсассăн хăв маттур

Ҫу каҫа ĕҫ-хĕл юрри кĕрлетĕр,
Хĕл каҫа хăна-вĕрле вĕрлетĕр.
Нӳхрепре пахча-ҫимĕҫ тулли.
Пит-куҫра ҫиҫет хĕвел кулли!

Чечеклентĕр савнă Чăваш ҫĕрĕ,
Пуян пултăр ĕҫлĕ ывăл-хĕрĕ!
Тăнăҫ тăтăр аслă ҫут тĕнче.
Ҫăтмах пултăр хамăр ҫĕр ҫинче

---

*Раиса САРПИ 1951 ҫулхи кăрлач уйăхĕн 2-мĕшĕнче Патăрьел районĕнчи Нăрваш Шăхаль ялĕнче ҫуралнă. И. Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университетĕнчен вĕренсе тухнă. Чăваш кĕнеке издательствинче, Чăваш патшалăх пукане театрĕнче ĕҫленĕ, "Пике" тата "Путене" журналсен тĕп редакторĕ пулнă, И.Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университетĕнче искусство кафедринче ĕҫленĕ.*

*1981 ҫулта СССР Писательсен союзне кĕнĕ. Сăвăсемсĕр пуҫне пьесăсемпе калавсем ҫырать, куҫарать. Ҫеҫпĕл Мишши, Алексей Талвир, Нежип Фазыл ячĕллĕ премисен лауреачĕ, Чăваш Республикин культурин тава тивĕҫлĕ ĕҫченĕ, «Чăваш Республики умĕнчи тава тивĕҫлĕ ĕҫсемшĕн» орден медальпе чысланă ăна.*

*Унăн тĕп кĕнекисем: "Парне", "Транкки", «Розы в росе», «Кăвак хуппи», «Хĕреслĕ ҫиҫĕм», "Тăрнаккай", «Ҫăлтăр ҫумăрĕ», "Илемпи юмахĕсем" тата ыт. те.*

*Раиса Васильевнăна ҫавра ҫулĕпе саламлатпăр, малашне те хастар пулма сунатпăр!*
*Ĕмĕрех хаваслӑ пурăн,*
*Яланах ҫап-ҫамрăк курăн!*